# Çĕнĕ çул

*(Çĕнĕ çул уявĕн сценарийĕ)*

***Л.П. Григорьева,*** *Канаш районĕнчи Вăтапуçри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкулта чăваш чĕлхипе литератури вĕрентекен*

**Вылякансем:**

1-мĕш ертсе пыракан
2-мĕш ертсе пыракан
Хĕл мучи
Юр пике
Почтальон
Çĕнĕ çул
Ача
3 пăлан

**Уяв юхăмĕ**

**1-мĕш ертсе пыракан.**
Иртĕр тĕпеле, туссем,
Пирĕн кĕтнĕ хăнасем,
Чăрăш тавралла тăрар,
Юрлар, ташлар, савăнар. (П. Çăлкуç).

**2-мĕш ертсе пыракан.** Тăпăл-тăпăл та ĕлккен
Тетте çакнă чиперкке,
Çĕнĕ çул уявĕнче
Савăк унăн умĕнче.(С. Савгай).

*Ачасем «Чăрăш» юрра юрлаççĕ.*

**2-мĕш ертсе пыракан.** Çĕнĕ çулăм, Çĕнĕ çул,
Ут хăюллă, паттăр пул.
Сума су эс ĕçчене –
Тулăх пурнăç хуçине. (В. Давыдов-Анатри)

**1-мĕш ертсе пыракан.** Кĕçех ак Çĕнĕ çул çитет,
Кашни ăна чунтан кĕтет.
Шап-шур сухаллă Хĕл Мучи
Илсе килет юмах тĕнчи.( М Каçалсем)

*Ачасем «Пăланăн çурчĕ пысăк»ташша ташлаççĕ.*

**2-мĕш ертсе пыракан.** Пурне те валеçет парне:
Ăш пиллĕх тивĕçет пĕрне,
Парать вăл сывлăх чирлине,
Çут шанчăк çитĕ теприне. (М. Каçалсем)

**1-мĕш ертсе пыракан.** Хĕл Мучин хĕрӳ саламĕ
Ăшăтать чун-чĕрене.
Кам-ши халĕ кăмăлламĕ
Чиперкке Юр пикене? (В. Кервен)

**Юр пике.** Шак-шак-шак-шак! Хĕл Мучирен маларах çитрĕм пулмалла. (Унталла-кунталла пăхать). Ачасем пурте килсе çитнĕ. Сывлăх сунатăп, ачасем! Чăрăш пирĕн çутăлман. Хĕл Мучи киличчен чăрăша çутса хурар. Асамлă патак, пулăш мана! (Чăрăш çутăлать, ачасем алă çупаççĕ).

**Юр пике.** Çитмĕл çичĕ çутă çăлтăр
Килчĕ тейĕн хăнана,
Чăрăш çиçет йăлтăр-йăлтăр
Илĕртсе пур ачана. (В. Кервен)

Вĕренме кашни пултарнă,
Ĕç те тунă темĕн чул.
Çавăнпа та пит ытарлă
Пирĕн кĕтнĕ Çĕнĕ çул.(В. Кервен)

**2-мĕш ертсе пыракан.** Эпĕ шăна пуçларăм. Хĕл Мучи çывхарса килет пулĕ. Айтăр пурте пĕрле вичĕ хутчен: «Хĕл Мучи !Сире кĕтетпĕр!» – тесе кăшкăрар.

**1-мĕш ертсе пыракан.**
Тустарать çеç çил-тăман,
Чĕпĕтет сивви питрен.
Кӳлнĕ Хĕл Мучи пăлан,
Килсе çитрĕ Çурçĕртен.(М. Каçалсем)

*Виçĕ пăлан кӳлнĕ шăнкăрав сассипе Хĕл Мучи килсе çитет.*

**Хĕл Мучи.** (Кăшкăрса килет.) Ăхă-хă-хă-ă-ă! Эп кунта! Сывах-и, ачасем, вĕрентекенсем, хăнасем!

**Хĕл Мучи.**
Хĕл Мучи эп, Хĕл Мучи –
Сивĕ шартлама хуçи.
Васкăр туслашма манпа,

Шур сухаллă юр çынпа.(П. Çăлкуç).

**1-мĕш ертсе пыракан.** Хĕл Мучи ,Хĕл Мучи !

Каласам, эс кам ачи?
Кам аннӳ сан? Кам аçу?
Ăçта иртет пурнăçу? (В. Тарават).

**Хĕл Мучи.** Сив Хĕлле – аннеçĕм манăн,

Ак тĕл пулăн эс ăна.
Шартлама – аттеçĕм манăн.
Курăн – хуплăн сăмсуна.
Пурăнатпăр çурçĕрте
Пысăк капăр керменте.(В. Тарават).

**2-мĕш ертсе пыракан.** Хĕл Мучи хăйпе паллаштарчĕ. Халĕ ăшăнмалла юрă шăрантарар.

*Юрласа вылямалли вăйă«Хĕл Мучи».*

1. Эсĕ, эсĕ, эсĕ, эсĕ
   Чăрăш илсе килтĕн-и?
   Эпĕ, эпĕ, эпĕ, эпĕ
   Чăрăш илсе килтĕм.
2. Санăн, санăн,санăн, санăн,
   Çакăн пек сухал-и?
   Манăн, манăн, манăн, манăн,
   Çакăн пек сухал.
3. Санăн, санăн,санăн, санăн,
   Çакăн пек алса туль-и?
   Манăн, манăн, манăн, манăн,
   Çакăн пек алса туль.
4. Эсĕ лайăх, эсĕ савăк
   Ыр кăмăллă Хĕл Мучи.
   Эпĕ лайăх, эпĕ савăк
   Ыр кăмăллă Хĕл Мучи.

**1-мĕш ертсе пыракан.**

Хĕл Мучине мухтар-и,
Юр пикене ырлар-и,
Алран-ала тытар-и,
Çĕн çул юрри юрлар-и. (М. Сениэл).

*Ачасем юрлаççĕ, ташлаççĕ. « Савăнăçлă хĕл çитрĕ» юрра, «Буги-буги» таша ташлама юрать.*

**Почтальон.** Сывлăх сунатăп, ачасем! Эсир мана пурте паллатăр. Эпĕ сире валли конвертсенче хыпар илсе çӳретĕп. Паян Хĕл Мучи валли те хыпар пур.

Акă вăл вăрттăн çыру. (Хĕл Мучи уçса вулать).

**Хĕл Мучи.** Ачасем, сире вăйă выляма чĕнеççĕ. Хатĕр-и?

**Ачасем.** Хатĕр, Хĕл Мучи!

*«Çул çӳрев» вăйă. (Майĕпен вуламалла, ачасем илтнине евĕрлесе хусканусем туса пыраççĕ).*

Хамăра самолетпа ларса кайнă пек туйса инçе çула тухатпăр.
Африкăна ансаларатпăр.
Тӳпере пысăк хĕвел.
Туратсем çинче банансем ӳсеççĕ.
Банансене сиксе тататпăр та
Шуратса çиме пуçлатпăр.
Упăтесене памастпăр!
Çисе тăранатпăр та малалла вĕçетпĕр.
Акă Çурçĕр полюсĕ.
Йĕри-тавра пăр.
Кунтах Хĕл Мучин асамлă пӳрчĕ.
Кăшт пăр çине ларар.
Хускалмасан – шăнса вилме те пулать.
Пурте пĕрле вырăнта утар.

Тарăннăн сывлар.
Хул пуççине хускатар.
Çӳлелле сиксе илер.
Вырăнта чупса пăхар…
Вăйă пурне те ăшăтрĕ.
Самолет çине ларар,
Шупашкара çул тытар,
Майĕпен анса ларар.

**1-мĕш ертсе пыракан.** Айтăр, ачасем, Африкăпа Çурçĕр полюсне ăнăçлă кайса килнĕ ятпа савăнса юрлар, ташлар.

*«Юр пĕрчи» юрра юрлаççĕ, «Пĕчĕк кăвакалсен ташшине» ташлаççĕ.*

**Юр пике.** Айтăр халĕ «Асамлă мечĕк» вăййа вылятпăр. (Кĕвĕ янăрать. Алран-ала мечĕк яраççĕ. Вăл кам патне çитсен кĕвĕ чарăнать – çавă ташлать.)

**Пурте пĕрле юрлаççĕ**:

1. «Ташла, ташла,Таçук,
   Пушмак илсе парăпăр:
   Ĕнчĕ тĕрĕллине,
   Мерчен тӳмеллине.
2. Ташла, ташла, Тарук,
   Тутăр илсе парăпăр:

Хĕрлĕ пурçăннине,
Ука çӳçеллине..(Халăх юрри).

**Хĕл Мучи.** Ашапатман карчăк тупмалли юмахсем парса ячĕ. Кам тупсăмне тупать – манран парне илет. Тупаймасан – карчăк хăй патне пуçтарса каять.

**Хĕл Мучи.** Çарамас мар эпĕ те,
Эпĕ – сарă кĕпепе.
Усал мар, эп тумтирпе,
Илĕртӳллĕ питĕ те.
Сĕвес пулсан ман «тире»
Макăртатăп эп сире.

*(Сухан)(А. Савельев-Сас).*

Шыва кĕрет шăрăхра
Мĕкĕрсе те уласа.
Хĕлле выртать шăтăкра
Ура тупань çуласа.

*(Упа) (А. Савельев-Сас).*

Хăлхи вăрăм – шит ытла,
Тути катăк –
Кулăшла.
Ытти пирки ху шутла.

*(Мулкач) (А. Савельев-Сас).*

Нумай пĕлес тесен кĕнеке листине мĕн тумалла?

**Ача.** Сирмелле.

**Хĕл Мучи.** Сирмелле мар, ачасем, мĕн тумалла?

**Ачасем.** Вуламалла.

**Хĕл Мучи.** Питĕ тĕрĕс. Пултаруллă ачасем, Ашапатман карчăк аллине лекмерĕç. Ман парнене тивĕçрĕç.

*Ракета сасси илтĕнет. Çĕнĕ çул ларса килет. Ракетине чăрăш айне хурать.*

**Çĕнĕ çул.** Сывах-и, ачасем, вĕрентекенсем, хăнасем!

Сывлăх сунатăп! Сывлăх сунатăп! Эпĕ Çĕнĕ çул! Пурте мана чăтăмсăррăн кĕтеççĕ.

**1-мĕш ертсе пыракан.** Çĕнĕ çул! Çĕнĕ çул!
Пĕрле ташă ташлар-и?

*«Малалла 4 утăм» ташша ташлаççĕ, «Çĕнĕ çул» юрра юрлаççĕ.*

**Çĕнĕ çул.** Халĕ ман ыйтусене хуравлăр.
Çĕнĕ çулта юрă-ташăпа туслă пулатпăр-и?

**Ачасем (пурте пĕрле).** Пулатпăр.

**Çĕнĕ çул.** Туслăха çирĕплететпĕр-и?

**Ачасем.** Çирĕплететпĕр.

**Çĕнĕ çул.** Çĕнĕ кĕнекесемпе туслашатпăр-и?

**Ачасем.** Туслашатпăр.

**Çĕнĕ çул.** «Пиллĕкпе» анчах вĕренетпĕр-и?

**Ачасем.** Вĕренетпĕр.

**Çĕнĕ çул.** Савăнăçлă ташă ташлатпăр-и?

**Ачасем**. Ташлатпăр.

**Çĕнĕ çул.** Пурне те ташă картине чĕнетпĕр.

*Пурте « Вальс» ташлаççĕ.*

**1-мĕш ертсе пыракан**: Ах, Çĕнĕ çул! Ах,Çĕнĕ çул!
Пуриншĕн те телейлĕ пул!
Кирлех-çке пурнăçра тату,
Таса та çутă юрату. (М. Каçалсем).

*Чăваш ташши ташлаççĕ.*

**2-мĕш ертсе пыракан.** Çĕнĕ çул çитнĕ май çут телей, тусăмсем,
Çĕн çулта çĕн тĕллев, çĕнĕ ĕмĕт,
Çирĕп сывлăх сире, ӳсĕмсем,
Иксĕлми ăнтăлу ĕмĕр-ĕмĕр. (М. Каçалсем)

**Хĕл Мучи.** Халĕ Çĕнĕ çулпа пĕрле ачасен тимлĕхне те тĕрĕслесе пăхар.

*«Светофор» вăйă. «Хĕрлĕ» тесен хускалмасăр тăратпăр. «Сарă» – алă çупатпăр. «Симĕс» – вырăнта утатпăр.*

**1-мĕш ертсе пыракан.** Çĕнĕ çул парнелет çĕнĕ шанчăк уççи.
Пултăр çеç юн вĕри, чун таса.
Пит хастар Хĕл Мучин пултарулăх лаççи –
Паратех ыр тивлет туптаса.(М. Каçалсем)

**2-мĕш ертсе пыракан. У**ява вĕçлесе пынă май хăнасене, аннесене сăмах парăпăр.

Уяв вĕçленсе пырать, пурне те тепĕр хут çывхарса килекен Çĕнĕ 2019 çул çитнĕ ятпа саламлатпăр.